27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
4
ЫТЛАРИКУН
67 (6562) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## СОВЕТ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПĔЛТЕРНИ

Апрелĕн 2-мĕшĕнче каçхине ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ совет пичечĕпе ют çĕршыв пичечĕн представителĕсене чĕнсе илнĕ те Совет правительстви ячĕпе çапла каланă:

Хĕрлĕ Çар, малалла ăнăçлăн куçса пырса, ССР Союзĕпе Румыни хушшинчи государство чиккин пулса тăракан Прут шывĕ çине тухрĕ. Çакăнпа вара совет государствин чиккине, Совет Союзĕпе Румыни 1940 çулхи договор тăрăх тунăскере, Румыни правительстви гитлерла Германипе союзлă пулса 1941 çулта [illegible] пăсниккерне, пĕтĕмпех çирĕплетсе тăвас пырать. Хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çар совет çĕрне мĕнпур тăшман çарĕсенчен тасатса пырать. Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи чикке пĕтĕмпех каялла тултарса вăхăт та инçе мар ĕнтĕ.

Совет правительстви çакăн çинчен пĕлтерет: Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пыракан чаçĕсем, Германи çарĕсене тата унпа союзлă Румыни çарĕсене хăваласа пырса, кăшпĕр участоксенче Прут шывĕ урлă каçнă тата Румыни çĕре çине кĕрсе кайнă. Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ совет çарĕн наступлени туса пыракан чаçĕсене тăшмана пуçĕпех çапса аркатичченех тата парантаричченех хăвалама приказ панă.

Çакăнпа пĕрлех Совет правительстви çапла пĕлтерет: вăл Румыни çĕрĕн мĕнле те пулин пайне туртса илме тата Румынире халĕ пур общество строине улăштарма шутламасть. Совет çарĕсем Румыни çĕрне вăрçă хушнă пирки тата тăшман çарĕсем халĕ те хирĕç тăнă пирки çеç кĕрсе кайнă.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

### АПРЕЛĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАРНОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри малалла талпăнса пынă, Тарнополь облаçĕнчи район центрне—ПОДГАЙЦЫ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ЗАВАЛУВ, ГОЛЕШУВ, ТОВСТОБАБЫ, ЮНЬЧАКИ, КРЫМИДУВ, ТУМИР, МЕНДЗЫГУЖЕ ятлă пысăк ялсем тата КОМАРОВКА, НИЖНЕВ, ОЛЕШУВ ятлă чугун çул станцийĕсем.

КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем НЕДОБОЕВЦЫ, ПАШКОВЦЫ, СТАВЧАНЫ, ДОЛИНСЯ, ДИНА УЦИ, МАЛИНЕШТИ, КОТЕЛЕВУ, ФОРОСТНА ялĕсене туртса илнĕ те ХОТИН хули çине вăркăнса кĕрсе кайнă, тăшманпа урамсенче çапăçма тытăннă.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе-çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла талпăнса пынă, 30 ял ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — МЫНДРЕШТИ, ТЕЛЕНЕШТИ, ВЕРЕЖЕНИ, НЕГУРЕНИ, СКОРЦЕНИ, ГИДУЛЕНИ, ЧИНИШЕУЦЫ, ЕНИМАУЦЫ, МОКРА, ТОПАЛЫ, ЧЕРНА ятлă пысăк ялсем.

ТИРАСПОЛЬ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Одесса облаçĕнчи ТРОИЦКОЕ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ытти 60 яла ытла йышăннă. Вăл шутра — НОВОСЕЛОВКА, КОХАНОВКА, ДЕНИСОВКА, НИКОЛАЕВКА, ВИКТОРОВКА, КАМИНСКОЕ ятлă пысăк ялсем.

ОДЕССА хули енче пирĕн çарсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—ЧЕРНЫЙ КУТ, ШАБЕЛЬНИК, БИРЬКИ, ДЕМИДОВКА, АНАТОЛЬЕВКА, КОТОВСКОГО, НЕЙКОВО, ЧЕРНОГОРКА, СЕРБКА, КАПИТОНОВКА, НЕЙЗАЦ, ТАШИНО, БЛЮМЕНФЕЛЬД, ТУЗЛЫ, КОБЛЕВО, КАРАБАШ, АДЖИАСКА ятлă пысăк ялсем тата РАУХОВКА, МАРИНОВО, СЕРБКА ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тÿснĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 33 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 86 самолетне персе ÿкернĕ.

### АПРЕЛĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 2-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Станислав облаçĕнчи район центрĕсене — КОСОВ хулине, КУТЫ хулине тата Черновицы облаçĕнчи район центрне—ГЕРЦА хулине туртса илнĕ.

КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла талпăнса пынă, Черновицы облаçĕнчи район центрне—НОВОСЕЛИЦА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă. Вăл шутра—МАРШИНЦЫ, ТАРАСОВЦЫ, ВАНЧИКОВЦЫ, ДУМЕНЬ, КОШУЛЕНЬ ятлă пысăк ялсем тата ВАНЧИКОВЦЫ, НОВОСЕЛИЦА ятлă чугун çул станцийĕсем.

КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе-çĕмĕрсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла талпăнса пынă, Молдаван ССР-ĕн район центрне—РЕЗИНА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — КРАСНОШЕНИ, СУХУЛУЧЕНИ, КЛИШОВА, ЧОКОЛТЕНИ, КИШТЕЛЬНИЦА, ЗАГОРЕНЬ, БУШОВКА, ГОРОДИШТЯ, НОВО-КРАСНОЕ, СТЕПАНОВКА ятлă пысăк ялсем.

ТИРАСПОЛЬ хули енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, Одесса облаçĕнчи ШИРЯЕВО район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ФЛЕРА, МАЛАЯ КОНДРАТОВКА, БОЛЬШАЯ КОНДРАТОВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, МАРЬЯНОВКА, МИХАЙЛОВКА, ЯКИМОВ ЯР, НОВАЯ ГУЛЯЕВКА, СТАРАЯ ГУЛЯЕВКА ятлă пысăк ялсем.

ОДЕССА хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса 50 ял ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ВУЛЬФОВО, НОВО-ПЕТРОВКА, НОВАЯ ЕЛИЗАВЕТОВКА, ЕВГЕНЬЕВКА, ДЖУГАСТРОВА, ЛЮБОТАЕВКА, БАЛАЙЧУК, МАКСИМОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, ПЕТРОВСКОЕ ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 19 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 40 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пирĕн танкистсемпе пехотинецсем, çав тери хăвăрт малалла куçса, Станислав облаçĕнчи район центрĕсене — Косов хулине, Куты хулине тата Черновицы облаçĕнчи район центрне Герца хулине туртса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Пĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен отряд, сасартăк пырса çапса, тăшманăн пысăк колоннине аркатса тăкнă. Тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Хăй тĕллĕн çÿрекен 4 тупă, 11 бронетранспортер тата боеприпаспа çар япалисем турттарса пыракан 120 автомашина тытса илнĕ. Пĕр пысăк чугун çул станцийĕнче пирĕн çарсем пĕр паровоз тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 300 вагонпа платформа тытса илнĕ. Делятин хули районĕнче венгерсен 18-мĕш çăмăл пехотнăй дивизийĕнчи 49-мĕш полка пĕтĕмĕшпех, штабĕ-мĕнĕпех тата полк командирĕпе пĕрлех тыткăна илнĕ.

* * *

Каменец-Подольск хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă. Татăклă атака туса, совет боецĕсем Черновицы облаçĕнчи район центрне—Новоселица хулине туртса илнĕ. Аркатса тăкнă гарнизонăн юлашкийĕсем Прут шывĕ урлă ишсе каçса çăлăнса юлма хăтланнă, анчах та пирĕннисем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлă персе, вĕсене шыва путарнă. Тепĕр районра пĕр чаçри боецсем кун каçиччен 800 гитлеровеца вĕлерсе пĕтермĕ тата тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 4 зенитнăй тупă, 11 миномет, 40 автомашина, боеприпас склачĕ тата 2 апат-çимĕç склачĕ туртса илнĕ.

* * *

Кишинев хули енче пирĕн çарсем малалла талпăнса пынă. Тăшман [illegible] хытă хирĕç тăрать. Совет чаçĕсем [illegible] Тепĕр районра пирĕн [illegible] тăшманăн 282-мĕш пехотнăй дивизийĕн штабне аркатса тăкнă, 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Тирасполь хули енче пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Одесса облаçĕнчи Ширяево район центрне туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çапăçу хирĕнче хăйĕн техникине, хĕçпăшалне тата амаминисене пăрахса хăварать. Пĕр участокра совет подразделенийĕсем тупăсем, бронетранспортерсем, пулеметсем нумай тытса илнĕ, çавăн пекех тата гитлеровецсем мирлĕ халăхран туртса илнĕ пурлăха турттарса пыракан 50 автомашинăна тытса илнĕ. Кун каçиччен 500 нимĕç салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕн авиацийĕ тăшманăн Нарва заливĕнчи карапĕсен ушкăнĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Совет летчик-истребителĕсем, тăшман истребителĕсемпе çапăçса, нимĕçсен 3 самолетне персе ÿкернĕ. Çав вăхăтра пирĕн бомбардировщиксем тăшманăн артиллерийĕн вут-çулăм стени урлă шăтарса тухнă та, карапсем тĕлне вĕçсе пухса, бомбăсем пăраха пуçланă, çав бомбăсем тÿрех пырса тивнипе тăшманăн тральщикĕ шыва путнă.

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ Феодосия портне тапăннă. Тăшманăн портра тăракан карапĕсем тата çыранри артиллерийĕн зенитнăй тупписем хытă пеме пуçланă. Совет летчикĕсем, штурмласа пырса çапса, темиçе зенитнăй батарейăна пусарса лартнă. Самолетсен ушкăнĕ пырса çапнипе тăшманăн десант антармалли хăвăрт çÿрекен баржине шыва путарнă. Десант антармалли тепĕр баржине вăйлă сиенленĕ.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен Украинец партизанĕсен темиçе отрячĕ мартăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 21-мĕшне çитиччен ăнăçлă çапăçусем чылай туса ирттернĕ. Чугун çул çинчи пĕр участокра партизансем, тупăсене тата танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе персе, нимĕçсен пĕр çар эшелонне вут тивертсе янă, тăшманăн иккĕмĕш эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Совет патриочĕсем гитлеровецсем совет гражданĕсене Германие каторгăна илсе каякан поезда пырса чарнă. Партизансем поезд хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те 1.200 совет гражданне ирĕке кăларнă.

## Совет Союзĕн Геройĕ М. А. Сапожников Шупашкарта

Пирĕн паттăр земляк — Хĕрлĕ Ялав тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсен кавалерĕ, гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ, Совет Союзĕн Геройĕ летчик Михаил Александрович Сапожников апрелĕн 2-мĕшĕнче Шупашкара килнĕ.

Хĕрлĕ Çара кайиччен вăл Шупашкар хула совет исполкомĕн физкультурăпа спорт ĕçĕсен инспекторĕ пулса ĕçленĕ. Сапожников юлташ ĕнер ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн тата хула совечĕн работникĕсемпе тĕл пулса хăйĕн çапăçури ĕçĕсемпе паллаштарчĕ.

### Колхозсем шкулсене пулăшаççĕ

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Районри колхозсем ачасене çар ĕçне вĕрентме пулăшас тесе, çар кабинечĕсемпе площадкисем тума шкулсене укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ. Çапла, Анаткас Марка ялсоветĕнчи «Красноармеец» тата «Правда» колхозсем 200-шер тенкĕ, Шурча ялсоветĕнчи «Самолет» колхоз — 1500 тенкĕ, «Танк» колхоз — 1000 тенкĕ уйăрса панă.

Ишлей районĕнчи колхозсен çак пахха пуçарăвне ытти районсенче те сармалла.

### Лашасене юратса пăхмалла

КÿКЕÇ. Иккасси ялсоветĕнчи «11 лет Чувашии» колхоз конюхĕсем колхозра лаша ĕрчетессишĕн тăрăшмаççĕ. Пĕтĕ кĕсресене уйрăмăн пăхса усрама кунта пур майсем те пур. Çапла пулсан та, пĕтĕ кĕсресене уйрассишĕн конюхсем тăрăшмаççĕ. Иртнĕ уйăхсенче çес кунта виçĕ кĕсре хăм пăрахнă. Çакă вăл пăлтах конюхсен тирпейсĕрлĕхĕ пирки пулнă. Конюх И. Емельянов нумай пулмасть «Майка» ятлă кĕсрене кÿлсе хытă ывăнтарнă. Кĕсри, пĕтĕскер, витене таврăнсассăн хăм пăрахнă.

Çакăн пек тирпейсĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе колхоз правленийĕ те нимĕн те тумасть. Лашасем çине чунсăррăн пăхакансене, пĕтĕ кĕсресене сиенлекенсене ответ тыттармасть.

Н. ФЕДОРОВ.

## Мускаври станоксем тăвакан Ленин орденлĕ „Красный Пролетарий" завод коллективĕ Совет Союзĕнчи промышленноçпа транспортри мĕнпур рабочисене тата инженерла-техникла работниксене

# ЧĔНСЕ КАЛАНИ

**Хаклă юлташсем!**

Савăнăçлă кунсем пуçланса иртерет халĕ пирĕн çĕршыв. Хĕрлĕ Çар, хăйĕн çулĕ çинче нимĕçсен дивизийĕсене аркатса пырса, вĕсен техникине пĕтерсе е туртса илсе пырса, пĕр чарăнмасăр малалла, хĕвеланăçнелле улăпла утăмсемпе каять.

Оккупантсен пусмăрĕнче нумай асап курнă пирĕн совет çĕре, фашистла тискер кайăксем пирĕн тăвансен куççулĕпе тата юнĕпе шÿтернĕ совет çĕре утăм хыççăн утăм ирĕке тухса пырать. Хăйне ирĕке кăларакан воинсене вăл çав тери хавасланса кĕтсе илет.

Хĕрлĕ Çарăн ÿсĕмĕсем питех те пысăк. Днепр, Буг, Днестр шывĕсем инçетре юлчĕç ĕнтĕ. Украинăри 2-мĕш фронтăн мухтавлă çарĕсем Совет Союзĕн государство чиккине тухрĕç. Совет çарĕсем аслă Сталин ертсе пынипе хамăрăн таса çĕре нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатса çитерес вăхăт та инçе мар ĕнтĕ.

Хаклă юлташсем!

Эпир лайăх пĕлетпĕр, çĕнтерÿсем хăвăрт пулмарĕç, вĕсем пирĕн алла çăмăллăн кĕмерĕç. Пирĕн çар вăрçă пынă вăхăтра çирĕпленсе пычĕ. Вăл Сталинăн çĕнтермелли наукине çапăçу хирĕсенче алла илчĕ. Вăрçă пынă вăхăтра пирĕн пĕтĕм çĕршыв вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек улшăнчĕ.

Пирĕн заводсемпе фабрикăсем, колхозсемпе совхозсем çарпа çĕршыва вăрçă ĕçĕсене туса пыма, çĕнтерÿ тума мĕн кирлиссене пурне те парса тăраççĕ.

Пирĕн завод коллективĕ совет патриочĕсен пĕр пĕчĕк ушкăнĕ кăна пулса тăрать. Çапах та пирĕн ĕçре, эпир тунă çитĕнÿсенче хамăрăн Тăван çĕршывăн телейĕшĕн паттăр ĕçсем тума пултаракан совет çынисен ÿсĕмсемпе çитĕнĕвĕсем курăнса тăраççĕ.

Вăрçăччен эпир вăрçă хатĕрĕсем туса кăларман. Халĕ эпир вăрçă хатĕрĕсене Хĕрлĕ Çарăн темиçе вунă подразделенине парса тăратпăр. Çав хатĕрсене эпир поточнăй методпа тума пуçларăмăр та çулталăк хушшинче пĕр участокра, рабочисен хисепне 30 процент, оборудованисен хисепне 28 процент чакарса, продукци туса кăларассине икĕ хут ÿстертĕмĕр.

Пирĕн коллективра çĕнĕ рабочисем нумай хутшăнчĕç пулин те, юлашки çулталăк хушшинче нормăна тултарманнисен хисепĕ 5 хут чакрĕ.

Заводри стахановецсем, инженерсем тата техниксем иртнĕ çулта çĕршыва планран иртерсе 163 станок туса пачĕç.

Эпир станоксем тăвакан промышленноçра серипе тăвакан станоксене пуçласа поточнăй методпа тума тытăнтăмăр. Халĕ эпир рабочисем малтанхи чухлĕ ĕçленипех конвейер çинчен станоксем икĕ хут ытларах илме пултаратпăр.

Заводра 80 фронтовой бригада тунă, вĕсем пирĕн çамрăксен вăйне, пултарулăхне пуçарулăхне Тăван çĕршывшăн кĕрешнĕ çĕре пама организацилесе пыраççĕ.

Вăрçă эпир çĕнĕ йышши станоксем туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлессине чарма пултараймарĕ. Юлашки çулталăк хушшинче кăна эпир авиаци, танксен тата промышленноçăн ытти отраçлĕсем валли çĕнĕрен 12 тĕрлĕ станоксем туса кăлартăмăр. Коленчатăй валсене якатмалли станока тума ĕлĕк ултă уйăх кирлĕ пулнă пулсан, халĕ вăл станока виçĕ уйăх хушшинче тунă. Çĕнĕ йышши ытти станоксене те кĕске срoксенче туса кăларнă.

Вăрçă вăхăтĕнче эпир хамăрăн продовольстви базине турăмăр, 1943 çулта тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртрĕмĕр, 1944 çулхи çуракине хатĕрленсе çитрĕмĕр.

Эпир нимĕçсем ишĕлтерпĕ Можайскри МТС-а шефа илсе, ăна юсаса ура çине тăрататрăмăр, унăн мастерскойĕ валли оборудованисемпе инструментсем туса патăмăр, МТС-а электричество кĕртрĕмĕр.

Тракторсем валли запаслă пайсем тăвас тĕлĕшпе государство заданине февраль уйăхĕнче иртерсе тултарса, эпир столицăри предприятисем хушшинче малти вырăна тухрăмăр тата ВКП(б) Мускав область комитечĕпе Мускав хули комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илтĕмĕр.

Эпир заводра профилактори усрăмăр, унта пирĕн заводри рабочисем производствăран татăлмасăр 800 çын пулчĕç те ĕнтĕ.

Эпир 8-мĕш уйăх ĕнтĕ Оборона Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăра тытса тăратпăр.

Анчах ку сахал-ха. Эпир Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмлă-ха, мĕншĕн тесен пирĕн ÿсĕмсем вăл çĕнтерÿллĕн малалла кайни хыççăн ĕлкĕрсе пыраймассĕ-ха.

Мăй уявĕ çывхарса килет. Ăна капин çулах социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăйхăватпа сарса пынипе, производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессĕ. Кăçалхи мăй уявĕ умĕн совет çĕршывĕнчи пĕр патриот та пулин, пĕр предприяти коллективĕ те пулин нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн уйрăмăнах хастарлăн, пысăк çĕкленÿпе ĕçлемесĕр тăма пултарать-и-ха?

Акă мĕншĕн эпир, хамăрăн пĕтĕм ресурссене мобилизацилесе, хамăрăн шалти майсемпе пĕтĕмпех усă курса, май уявĕ умĕнхи ăмăртура хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илтĕмĕр:

1. Пĕрремĕш квартала планран иртерсе 50 станок тунипе вĕçлемелле. Государство планĕнчен иртерсе апрель уйăхĕнче 20 станок, иккĕмĕш кварталта 50 станок туса кăлармалла.
2. Иккĕмĕш çур çулта механически цеха пĕтĕмпех поточнăй метод çине куçармалла. Çакă вăл пире 1944 çулта станоксем туса кăларассине 50 процент ÿстерме правительство панă задание ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май парать.
3. Поточнăй производствăна малалла аталантарса пырса, иккĕмĕш кварталта продукци туса кăларассине пĕррремĕш кварталта туса кăларнă продукци хисепĕнчен 10 процент ÿстермелле.
4. Иккĕмĕш кварталта оборона промышленность предприятийĕсем валли çĕнĕ йышши станоксем туса кăларассине вĕренсе алла илмелле.
5. Ĕç тухăçлăхне 15 процент ÿстермелле, туса кăларакан продукцин хакне 10 процент йÿнетмелле.
6. Тракторсем валли запаслă пайсем тумалли апрель уйăхĕнчи плана срокчен пурнăçа кĕртмелле.
7. Подсобнăй хуçалăхра çураки ĕçĕсене 12 кун хушшинче, агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле.

Эпир хамăрăн пĕтĕм вăя, пĕтĕм пĕлÿлĕхе хамăр илнĕ обязательствăсене ку таранччен пекех чыслăн пурнăçлана çĕре паратпăр.

Хаклă юлташсем!

Эпир Сире мăй уявĕ умĕнхи ăмăртăва организацилеме, хăвăр çине татăклă обязательствăсем илсе, вĕсене чыслăн пурнăçа кĕртме чĕнетпĕр.

Вăрçă татăклă тапхăра çитрĕ. Хамăрăн вăйсене вăрçа хăвăрт пĕтерессишĕн, çĕнтерÿ сехетне çывхартассишĕн кĕрешнĕ çĕре парар. Пирĕн çитĕнÿсем Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿсем тума пулăшчăр, пирĕн мухтавлă боецсен çитменни нимĕн те ан пултăр, социализмлă ăмăрту танксемпе самолетсем, хĕçпăшалсемпе боеприпассем, апат-çимĕç тата снаряженисем тиенĕ çĕнĕ те çĕнĕ эшелонĕсене фронта ярса тăма пулăштăр.

Нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах тата тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн!

Сывă пултăр пирĕн юратнă çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар—ирĕке кăларакан çар!

Сывă пултăр пирĕн большевиксен партийĕ!

Сывă пултăр совет халăхĕн çулпуçĕ, унăн гениллĕ полководецĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

**Çак çырăва «Красный Пролетарий» заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксен тата служащисен 1944 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухăвĕнче пĕр саслăн йышăннă.**

**Завод коллективĕ хушнипе çаксем алă пуснă: Завод директорĕ П. Ф. ТАРАНИЧЕВ, главнăй инженер Г. Е. ГАНИЧЕНКО, партком секретарĕ А. И. ЕЛКИН, завком председателĕ Д. О. МАТЯГИН, ЦК ВЛКСМ комсоргĕ М. П. ШАГОВА, токарь — Сталинла преми лауреачĕ С. Ф. СМИРНОВ, цех начальникĕ П. В. БУБАРЕНКО, мастер И. Я. ЩЕРБАКОВ, цех начальникĕ Б. П. УВАРОВ, долбежник Я. Е. ВОРОНКОВ, комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадин бригадирĕ ЯЧМЕНЕВА, слесарь В. В. ЕРМОЛОВ.**

## Оборонăн Государственный Комитетне Сталин юлташа

**Хаклă Иосиф Виссарионович!**

1942 çулта фашистла нимĕç варварĕсем Сталинград çине тапăнса пынă чухне лайăх йышши хурçă шăратакан пысăк заводсенчен пĕрне—Сталинградри Ленин орденлĕ «Красный Октябрь» металлурги заводне ишĕлтерчĕç. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче фашистла нимĕç кĕтĕвĕсене аркатса тăкнă хыççăн Хура металлурги Халăх Комиссариачĕн 1-мĕш номерлĕ строительство трессĕпе завочĕн коллективĕсем хамăрăн ишĕлнĕ завода юсаса ура çине тăратма тытăнчĕç. Заводри рабочисен тата строительсен коллективĕсем, хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, рабочисемпе инженерсен рационализацилле шухăшĕсемпе тата пуçарулăхĕпе усă курса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, завода юсаса ура çине тăратаççĕ. Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене Сталинград патĕнче çĕмĕрсе тăкнă хыççăн çулталăк хушшинче 4 мартен кăмакине тата 2 прокат станне юсаса хута янă. Паян пирĕн чаплă уяв: заводри рабочисен тата строительсен коллективĕсем, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерÿсем тунине тата вăл государство чиккине тухнине ответлесе, ĕç фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерÿ турĕç. Эпир Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, мартăн 27-мĕшĕнче эпир хамăрăн блюминг станне юсаса пĕтерсе тĕрĕслесе пăхни çинчен тата мартăн 28-мĕшĕнче блюминга ĕçлеттерме тытăнни çинчен савăнса пĕлтеретпĕр. Пирĕн блюминга хута яни—вăл фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкмашкăн хамăрăн юратнă Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсем тума темиçе пин тонна лайăх йышши хурçă хушса пани пулать. Сире, хамăрăн çулпуçăмăр Сталин юлташ, «Красный Октябрь» заводри рабочисемпе инженерсем тата Хура металлурги Халăх Комиссариачĕн 1-мĕш номерлĕ строительство трессĕн рабочийĕсемпе инженерĕсем, заводăн ытти цехĕсене юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе тата та ытларах вăй хурса ĕçлесе, ĕç фронтĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвĕç, тесе шантарса калатпăр.

Сывă пултăр пирĕн фронтри тата тылри çĕнтерÿсен организаторĕ, хавхалантарса пыраканĕ, аслă çулпуç, полководец Сталин юлташ!

Сире, хамăрăн тăван Иосиф Виссарионович, пирĕн Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн нумай çулсем хушши ĕçлесе пурăнма сывлăх сунатпăр.

Хура металлурги Халăх Комиссариачĕн 1-мĕш номерлĕ строительство трессĕн управляющийĕ КРАТЕНКО.
«Красный Октябрь» завод директорĕ МАТЕВОСЯН.
ВКП(б) Центральный Комитечĕн трестри парторгĕ КОЛЧИН.
ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ МИХЕЕВ.
Трестри главнăй инженер МУЦЕНКО.
Заводри главнăй инженер ПАДУРОВ.

## *Сталинград,* „Красный Октябрь" металлурги заводне Кратенко, Матевосян, Колчин, Михеев, Муценко, Падуров юлташсене

Сталинградри Ленин орденлĕ «Красный Октябрь» металлурги завочĕн строительсемпе металлургĕсене блюминга ăнăçлăн юсаса хута янăшăн саламлатăп.

Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене чаплă çĕнтернĕ сĕрте Сталинградри металлурги завочĕн ишĕлтернĕ цехĕсене юсаса ура çине тăратас енĕпе тунă сирĕн паттăр ĕçĕр хамăрăн тылăн хăвачĕ пĕрмай ÿссе пынине кăтартать.

Сире «Красный Октябрь» металлурги завочĕн пур цехĕсемпе сооруженийĕсене те юсаса ĕçре тата ăна пĕтĕмпех хута ярас ĕçре малашне те ÿсĕмсем тума ыра сунатăп.

И. СТАЛИН.

# Японин Çурçĕр Сахалинри концессийĕсене хупасси çинчен тата Совет Союзĕпе Японин пулă тытас тĕлĕшпе тунă конвенцине улăштарса, унăн срокне малалла тăсасси çинчен Совет Союзĕпе Япони тунă килĕшÿсем

Юлашки уйăхсенче Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский тата Японин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Н. Сато господин пĕр-пĕрипе тĕл пула—тĕл пула калаçнă. 1944 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче вара Мускавра çакăнта пичетлекен протокола—«Японин Çурçĕр Сахалинри нефтьпе çĕркăмрăк концессийĕсене Совет Союзне парасси çинчен çырнă протокола» алă пуснă. Кунта аялрах тата «Японин Çурçĕр Сахалинри нефтьпе çĕркăмрăк концессийĕсен пурлăхне Совет правительствине памалли йĕрке çинчен» тунă килĕшĕве те пичетленĕ. Çав килĕшĕве Совет Союзĕпе Япони представителĕсем мартăн 10-мĕшĕнче алă пуснă. Малтарах асăннă протоколсăр пуçне, мартăн 30-мĕшĕнче тата «Протокола пурнăçа кĕртмелли условисене» те алă пуснă. Çав документра Японин Çурçĕр Сахалинри концессийĕсен прависемпе пурлăхне Совет правительствине памалли çинчен калакан протоколăн постановленийĕсене мĕнле пурнăçламалли çинчен тĕплĕнрех каланă, унта Японин гражданĕсем пулса тăракан рабочисемпе служащисене, нефтьпе çĕркăмрăк концессийĕсен предприятийĕсенче ĕçлекеннисене. Японие куçарса каймалли срокçене кăтартнă тата ытти те.

1925 çулта Совет правительстви Çурçĕр Сахалинра Японие нефтьпе çĕркăмрăк концессийĕсем панă пулнă. Çав концессисем пирки тунă килĕшÿсене 45 çуллăха тунă пулнă, çав концессисен договорĕсен срокĕ 1970 çулта тухмалла пулнă.

1941 çулхи çуркунне Совет Союзĕпе Япони пĕр-пĕрин тĕлĕшпе нейтралитет тытас пирки пакт тăвасси çинчен калаçнă чухне Совет правительстви Япони правительстви умне Японин çав концессийĕсене хупасси çинчен ыйту лартнăччĕ. 1941 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче нейтралитет çинчен калакан пакта алă пуснă чухне Японин çав вăхăтра ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Мацуока господин Совет правительствине хут çине çырнă обязательство панăччĕ, унта вăл Çурçĕр Сахалинри концессисене хупас ыйтăва темиçе уйăх хушшинче татса пама пулнăччĕ. Çав обязательствăна Мацуока господин 1941 çулхи майăн 31-мĕшĕнче çĕнĕ заявлени туса çирĕплетсе панăччĕ, çав заявление вăл Совет правительствине Японин Мускаври посолĕ урлă—Татекава господин урлă панăччĕ. Çавăн чухне Японин концессисене хупас ыйтăва нейтралитет пактне алă пуснă хыççăн 6 уйăхран кая юлмасăр татса пама пулнăччĕ. Анчах та çак обязательствăна Япони пурнăçламан. Мартăн 30-мĕшĕнче вĕçленнĕ калаçусем хыççăн çеç вара Японин Çурçĕр Сахалинри концессийĕсене хупасси çинчен тата çав концессисен пĕтĕм пурлăхне килĕшÿре кăтартнă условисемпе Совет Союзне парасси çинчен килĕшÿ туса алă пуснă. Çапла вара, çак килĕшĕве алă пуснине пула Японин Çурçĕр Сахалинри концессийĕсем концесси договорĕсен срокĕ иртиччен 26 çул маларах хупăнаççĕ.

* * *

Çакăнпа пĕрлех пулă тытас тĕлĕшпе 1928 çулта тунă конвенцие 5 çуллăха тăсасси çинчен Совет Союзĕпе Япони мартăн 30-мĕшĕнче алă пуснă протокола пичетленет. Çав протоколта Совет Союзĕн Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи шывĕсенче японецсем пулă тытмалли условисене мĕнле улăштармаллине кăтартнă.

Пулă тытас пирки тунă конвенци тĕлĕшпе Совет Союзĕпе Японин çĕнĕрен тунă килĕшĕвĕнче çапла тунă:

а) пулă тытмалли 24 участока, Японин пулă промышленникĕсем тара илнĕскерсене, анчах та 2 çул хушши усă курманскерсене, вĕсенчен каялла илмелле;

б) японецсем пулă тытакан участоксене торгине тăратнă чух совет организацийĕсем çуллен çав участоксен 10 процентне торгипе илме пултараççĕ;

в) Японин пулă промышленникĕсем ылттăнпа тÿлекен аренда укçине тата ытти тÿлевсене 1943 çулхи шайĕнчен 6 процент ÿстермелле.

Пулă тытас тĕлĕшпе 1928 çулта тунă конвенци совет организацийĕсемпе совет гражданĕсене пулă тытса пурăнас тĕлĕшпе чылай хĕсĕкрех условисем туса панă пулнă. Совет Союзĕпе Япони мартăн 30-мĕшĕнче алă пуснă килĕшÿ çав хĕсĕк условисене пĕтерсе лартнă. Пулă тытас тĕлĕшпе тунă конвенцирен совет организацийĕсемпе совет гражданĕсен пулă тытса пурăнас ыйтăвĕсене пурне те кăларса пăрахнă, вăл ыйтусене Совет государствин органĕсем çеç пăхса тăраççĕ.

Совет Союзĕпе Японин халĕ алă пуснă килĕшÿ тата çакăн çинчен калать: çак вăрçă пĕтиччен Япони гражданĕсем тата ытти ют çĕршывсен гражданĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнче тинĕсри уйрăм районсенче, Совет правительстви 1941 çулхи июль уйăхĕнче кăтартса панăскерсенче, пулă тытма пултараймаççĕ.

Кунсăр пуçне, совет правительстви ыйтнă тăрăх, Япони правительстви çакăн пек обязательство илнĕ: Япони гражданĕсем тара илнĕ пулă тытмалли участоксемпе, Камчаткăн хĕвелтухăç çыранĕнчи тата Олюторск районĕнчи участоксемпе, Япони арендаторĕсем Лăпкă океан çинчи вăрçă пĕтиччен усă курмалла, мар.

* * *

Мартăн 30-мĕшĕнче Япони правительстви Совет Союзĕн правительствине хăйĕн Александровск хулинчи Генеральнăй Консульствине тата Çурçĕр Сахалинри Оха хулинчи Вице-Консульствине хупма йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

Çав кунах Совет правительстви Япони правительствине Совет Союзĕн Японири Хакадатăпа Цуруга хулисенчи консульствисене хупма йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

## К. В. Киселев юлташа Белорусси ССР-ĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне уйăрса лартни

ГОМЕЛЬ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Белорусси ССР Верховный Совет Президиумĕ Указ кăларса К. В. Киселев юлташа Белорусси ССР-ĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне уйăрса лартнă.

## Ӑлăстаççен кружокĕ

КŸКЕÇ. Платкари пуçламĕш шкулта ĕçлемелли пулмасть алăстаççен кружокне организацилерĕç. Унта пурĕ 15 хĕрача вĕренме çÿрет. Вĕсем халĕ кашниех алшиш-чăлхасем çыхма вĕренсе çитрĕç.

**Н. МЫШКИН**

## СУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР

# Суракине хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ

КАЛИНИНО. Районри чылай колхозсем çитес суракине иртерме тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕç. Суракине пур енпе те хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе пулса иртнĕ фронтовой уйăхлăхра Услапари «Броневик», Айкăшри Киров ячĕпе тăракан, Алгазинăри «Чăваш Коммуни», Чулкаçри «Смычка», Юнтапари «Алмаз» тата ытти чылай колхозсенче тĕрĕслÿсем пулса иртрĕç.

Услапари «Броневик» колхозăн кăçал 300 гектар ытла тĕштырăсемпе пăрçа йышши тырăсем, 50 гектар ытла техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем акса хăвармалла. Тĕштырăсене 6 кун хушшинче акса хăварас тесе, колхозниксемпе колхозницăсем суракине лайăх хатĕрленнĕ. Икшер касăллă 30 плуга лайăх юсаса тунă. Лаша таврашĕсемпе транспорт инвентарĕсене çирĕп юсанă. Вăрлăхсем пурте кондициллĕ.

Ку колхозра пуринчен ытла суракине иртерме А. Сорокин юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада кăтартуллăн хатĕрленнĕ. Унăн бригадин çурхи тырăсем 70 гектар ытларах акса хăвармалла. Сорокин юлташ сураки иртермелли план туса колхозниксем хушшинче сÿтсе-явнă. План тăрăх 16 лаша яланах суха тумалла, 6 лаша сÿрелемелле, 4 лаша сеялкăпа тырă акмалла тата икĕ вăкăрпа вăрлăх турттармалла. Лаша апачĕсене çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Суракине иртерме Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз та лайăх хатĕрленнĕ. Çирĕплетнĕ план тăрăх, суракинче 63 лаша, 4 вăкăр ĕçлемелле. Вĕсене кÿлмелли хатĕрсене пурне те юсаса хатĕрленĕ. Тимĕрçĕ Федор Волков ялхуçалăх машинисене пысăк пахалăхпа юсарĕ. Тĕрĕслÿ комиссийĕ юсанă плугсемпе сеялкăсене питех те ырларĕ. Çавнашкалах хăмăтсем юсакан 71 çулхи ватă колхозник Г. Тимофеев юлташ та тăрăшса ĕçленĕ.

Вăрлăхсемпе выльăх апачĕсем кирлĕ таранах пур. Сураки вăхăтĕнче колхозра общественнăй столовăй уçалать, унта ĕçлеме колхозницăсене уйăрса çирĕплетнĕ.

Калас пулать, тĕрĕслÿре Чулкаçри «Смычка» колхоз суракине çителĕксĕр хатĕрленни палăрчĕ. А. Михайлова ертсе пыракан 1-мĕш бригадăра плугсене начар юсанă. 4 плугран 2 плугне комисси тепĕр хут юсама хушнă. Мария Аркадьева ертсе пыракан 3-мĕш бригадăра лаша кÿлмелли хатĕрсене япăх юсанă. Хăшпĕр ĕнерчĕксене тĕплĕн юсаман, сÿресен шăлĕсене кĕске лартнă.

Комисси çак çитменлĕхсене хăлех пĕтерме хушса хăварчĕ.

**Е. ВОРОБЬЕВ.**

## Ватă патриотка

ИШЛЕЙ. Çĕньял Покровски ялсоветĕнчи «Ялду» колхоз членĕ Ирина Данилова юлташ, ватă пулсан та, халĕ вăрçă пынă вăхăтра шута илсе, колхозра куллен тимлĕн ĕçлет. Данилова юлташ иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче, ырми-канми ĕçлесе, 300 ĕçкунĕ ытла тунă. Халĕ вăл кивсен 37 пăт тырă вăрлăхлăх пачĕ.

— Манăн вицĕ ывăл фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Эпĕ те колхозра куллен ырми-канми ĕçлесе фронта пулăшатăп,—тет Данилова юлташ колхозниксем умĕнче.

## Вăкăрсене кÿлме вĕрентеççĕ

КŸКЕÇ. Платкари «Красное знамя» колхозра вăкăрсене кÿлме вĕрентеççĕ. Çак кунсенче колхоз пĕр вăкăра, Мышкинпа Лазарев колхозниксем хăйсен килĕсенчи вăкăрĕсене кÿлме вĕрентрĕç. Халĕ вĕсем лаша пекех лăпкă пыраççĕ.

# Синьцзянри çар чаçĕсем казах беженецĕсене пени

УЛАН-БАТОР, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Нĕлсе тăракан ушкăнсенчен кунта çакăн пек хыпарсем илнĕ. 1943 çул пĕтсе килнĕ кунсенче Синьцзян провинцийĕн (Китай) вырăнти влаçĕсем Алтай округĕнчи казах халăхне питĕ нумайĕшне вăйпа ирĕксĕрлесе Синьцзян провинцийĕн кăнтарти районĕсене куçарса кайма тытăннă. Казахсен çемьисем нумайĕшĕ куçса кайма килĕшмен, вара вĕсем, Синьцзянри çар чаçĕсем хăваланипе хÿтлĕх шыраса, Монголи Халăх Республикин территорийĕ çине тарнă, унта вĕсене Монголи влаçĕсем беженецсем вырăнне хурса йышăннă.

Синьцзян провинцин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче тăракан Китай çарĕсем, казахсене хăваласа пырса, Монголи Халăх Республикин территорине кĕрсе кайнă та самолетсем çинчен çав беженецсене тата Монголи халăхĕ пурăнакан пунктсене пенĕ. Монголи Халăх Республикин правительстви Монголи Халăх Республикин чиккипе çавăн пек сĕмсĕрленсе пăсние ахалех хăварма пултарайман, вăл Монголи Халăх Республикине кĕрсе кайнă, Синьцзян çарĕсене тивĕçлĕ отпор панă.

Çак пулса иртнĕ ĕç тĕлĕшпе Монголи Халăх Республики правительстви ертсе пыракан ушкăнĕсенче çапла калаççĕ: Синьцзянри çарсем Монголи Халăх Республикин чиккине малашне çавăн пек татах пăсас-тăвас пулсан, эпир ирпе Совет правительстви пулăшасса шанса тăратпăр, мĕншĕн тесен Совет Союзĕпе Монголи Халăх Республики 1936 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор тăрăх, Совет правительстви Монголи Халăх Республики территорийĕн хăрушсăрлăхне сыхласа хăварма Монголи Халăх Республикин правительствине мĕн кирлĕ таран пулăшу памалла.

# Ют çĕршывсенче

## Мексико хулинче Хĕрлĕ Çар ячĕпе савăнăçлă вечер туса ирттернĕ

МЕКСИКО, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 29-мĕшĕнче Мексико хулинче Хĕрлĕ Çар ячĕпе Германи çарĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкни çулталăк тултарнине палăртса савăнăçлă вечер туса ирттернĕ. Ку вечера Испанири республиканецсен ĕçĕсене йĕркелесе пыракан комисси тунă, вăл комиссире 36 организаци представителĕсем тăраççĕ.

Вечера испанецсен тĕрлĕ организацийĕсен членĕсем тата Мексикăри рабочисен, хресченсен, интеллигентсен представителĕсем, мĕн пурĕ 2.000 çын пулнă.

Савăнăçлă вечер пĕтес умĕн «Сталинград» ятлă кинофильм кăтартнă. Вечерти халăх ăна питĕ юратса пăхнă.

Вечер ячĕпе саламласа çырнă темĕн чухлĕ телеграмма пынă. Вĕсене пурне те вечерта вуласа панă. Çав саламсем хушшинче Мексика революцийĕн партийĕ, хресченсен наци конфедерацийĕ тата Мексикăри халăхăн ытти нумай организацийĕсем те ырă сунса çырса янă телеграммăсем пур.

## РУМЫНИРЕ ÇЫНСЕМ ХĂРАСА ŸКНĔ

СТАМБУЛ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерăн Румынири тарçисем аптраса кайса чĕтрене ÿкни ÿссех пырать. Пуç пулса тăракан çынсемпе çыхăнса тусла пурăннă румынсем нумайĕшĕ юлашки вăхăтра ют патшалăхсене тухса тарма хăтланаççĕ. Çавăн пек ĕçе пĕтерсе лартас тесе, «Тимпул» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, чикĕ çывăхĕнчи пунктсене чугун çулпа кайма билетсем сутма чарнă. Ун пек билетсене ют патшалăха кайма паспортсем илнĕ е алăра Румынирен тухса каймалли хут пур çынсене кăна сутаççĕ.

«Бухарестер тагеблат» ятлă хаçат Прут шывĕн сылтăм енче лăракан Румыни хулисенчи халăха урăх çĕре куçарни çинчен пĕлтерет. Çак хуласенчен тухса каяс текен çынсем, влаçсем хушнă тăрăх, Румыни çĕршывĕн шалти вырăнĕсене ятарласа паракан хутсем илмесĕрех куçса кайма пултараççĕ.

Турцире тухса тăракан «Ла тюрки» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестра лару-тăру питех те çивĕчленсе кайнă. Хулара тем тĕрлĕ хăрушă хыпарсем çÿреççĕ.

СТАМБУЛ, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Кăнтăр енче Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пынă май, Румынири лару-тăру ытларах та ытларах хĕрсе пырать. Румыни чиновникĕсем, вырăнти власть представителĕсем тата промышленниксем Румынин çурçĕрти районĕсенчен урăх çĕре, шалти районсене тараççĕ. Турци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, çавăн пек Яссы хулинчен, Галац хулинчен тата ытти районсенчен те юлашки кунсенче темиçе пин çын тухса тарнă.

Йĕри-таврах хăрушă хыпарсем çÿреççĕ. Антонеску приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, хăрушă хыпарсем саракансене, саботаж тăвакансене судсăр-мĕнсĕрех персе пăрахмалла. Правительство уйрăм регенти йышăннă. Çав решени тăрăх, шалти ĕçсен министрĕ кирек-кам çуртйĕрне те, кирек камăн харпăрлăх пурлăхне те, сăрса вăтĕнсе выртмалли япалана çитиччен, туртса илме пултарать.

## БОЛГАРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ ПЫНИ

СТАМБУЛ, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). София хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Болгари правительстви, икĕ уйăх сурă çитет ĕнтĕ, «общество вăйĕ» текен организаци тăвас тĕлĕшпе кампани пуçласа янă. Çак организацие туса, правительство халăх хушшинче хăйне валли тĕрек тупма шутланă. Анчах та правительство ирттерекен кампани пăчланса ларнă. Шалти ĕçсен министрĕ Христов халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсенче организациллĕ комитетсем туса хунă. Ку комитетсене фашистсем майлă тăракан çынсене лартнă. Анчах та ку комитетсене халăх пĕрре те хапăл тумасть. Вĕсем халăха «общество вăйне» кĕме чĕнни ахалех харама кайса пырать.

Министрсем тата правительство майлă депутатсем темиçе çĕр хут та тухатуха каланă ĕнтĕ. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенче халăха пĕр пулса ĕçлеме, «общество вăйне» кĕме чĕннĕ. Анчах та калăх вĕсен сăмахĕсене те хапăл туса йышăнмасть. Çапла ĕнтĕ, Болгари халăхне Болгари правительстви шалти тата тулашри ĕçсем пирки тĕрĕс политика тытса пырать тесе ĕнентерме хăтланни путланса ларнă.

Болгарире оппозици вăйĕ ÿссех пырать, правительствăна хирĕçле шухăшсене халăхăн пур сийĕсем те кăмăлласа йышăнаççĕ. Ку движение Отечественнăй фронт ертсе пырать. унăн программине, пĕтĕмĕшпе илсен, демократи майлă мĕнпур политикăллă ушкăнсемпе юхăмсем те йышăннă.

Правительство ирттерекен кампани çакна лайăх кăтартса панă: болгар халăхĕ нимĕçсене хирĕç тăрать, вăл тăван вырăс халăхĕ майлă, вăл унăн геройла кĕрешĕвне тимлĕн пăхса асăрхаса тăрать.

## СЛОВАКИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ КАЙНИ

СТАМБУЛ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Словакин пуканелле влаçĕсем нумай çынна тытатыта хупаççĕ. Пуринчен ытла «усал хыпарсем» сарнă пирки тесе арестлеççĕ. Братислава хулинчи халăха урăх çĕре куçармалла тунă хыççăн хулара тĕрлĕ хыпар сарăлнă. Хуларан кăларса янă çынсен пÿрчĕсене нимĕç салтакĕсем йышăнмалла тесе калаçнă сасчÿ пур. Гитлеровецсен «Бухарестер тагеблат» ятлă хаçачĕ çапла çырать: çавăн пек «усал хыпарсем» сарнăшăн Братислава хулинче малтан 8 çынна тытса хупнă пулнă. Тепĕр кунне гестаповецсемпе Тисо полицийĕ тата 20 çын тытса хупнă. Хаçат çакна хыттăн палăртса хăварать: хăравçăсене, суя хыпарсем саракансене халĕ те çаплах тыта-тыта хупаççĕ, тет.

## ВЕНГРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: Венгрин Каллаи кабинетĕнче шалти ĕçсен министрĕ пулнă Крестеш-Фишера тахăшĕсем хăйĕн хваттерĕнчех вĕлерсе хăварнă. Германин Венгрири уполномоченнăйĕ панă приказ тăрăх Венгрин шалти ĕçĕсен çĕнĕ министрне Ярошна вырăнтан кăларнă. Ун вырăнне çав приказ тăрăхах Венгрири нимĕçсен руководителĕн заместительне лартнă.

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаксен Лондонри ушкăнĕсем илнĕ хыпарсем тăрăх; Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Венгри аэродромĕсене чылайĕшне пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнчех нимĕçсене панă. Çавăн чухнех венгерсен вицĕ дивизине мобилизациленĕ. Малта асăннă хыпарсем тăрăхах, çав аэродромсенче нимĕç летчикĕсем пурăннă, унта зенитнăй артиллери батарейисене лартса тухнă. Кăçалхи январьте нимĕçсем ытти аэродромсене те оккупациленĕ. Çак фактсене асăннă май, чехословаксен ушкăнĕсенче çапла калаççĕ: нимĕç салтакĕсем Венгрире çапла хăтланнă вăхăтра Каллаи Венгрин премьер-министрĕ пулса ĕçленĕ, Каллаи пуç пулса тăракан правительство ырламан пулсан, нимĕç салтакĕсем Венгрире ун чухнех çавăн пек хуçаланма хăяйман пулĕччĕç.

## ГЕРМАНИРЕ ÇАР ХАТĔРĔСЕМ ТĂВАКАН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ПРОДУКЦИЙĔ ЧАКНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат çапла пĕлтерет: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Германин çар хатĕрĕсем тăвакан промышленноçĕ союзниксен авиацийĕ тапăннипе пула кăна мар вăйлăн чакнă. Ĕç вăйĕсем тупас тĕлĕшпе ĕçлекен гитлерла уполномоченнăй Заукель тем пекех вăй хурса ĕçлет пулин те тата ют çĕршывсенчен илсе килнĕ йышлă рабочисемпе усă курассĕ пулин те, Германи промышленноçĕ ĕç вăйĕ çитменнипе аптăрать. Вăрçăчен çар хатĕрĕсем кăларакан заводсенче хĕрарăмсен хисепĕ 8 процент шутланнă пулсан, халĕ 30 процента çити ÿснĕ. Ĕç вăйĕ çитмен пирки Германире çĕркăмрăкĕ питех те çителĕксĕр тесе çырать хаçат.

## СОЮЗНИКСЕМ ШОЛТА УТРАВĔ ÇИНЕ ПЫРСА КАЙНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америка самолечĕсем тата çар карапĕсем Югославин Шолта утравĕ çине ăнăçлăн кайса килнĕ. Çĕрле утрав çине десант отрячĕ аннă. Шурăмпуç çутти тухсан, Англи самолечĕсем тăшманăн утрав çинчи сооруженийĕсене, вăл шутра радиостанцие, пĕтерсе тăкнă. Утрав çинчи гарнизонран 111 нимĕçе тыткăна илнĕ.

## Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 1-мĕшĕ ыран телĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксен соединенийĕсем Хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, америкăнецсен 8-мĕш авиаци корпусĕн командующийĕ Дулиттл генерал-лейтенант радиопа тухса каланă: юлашки сакăр эрне хушшинче америкăнецсен саккăрмĕшпе тăххăрмĕш авиаци корпусĕсем нимĕçсен 2.100 самолетне ытла пĕтернĕ. Кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Германири тĕрлĕ объектсем çине 26 пин тонна ытла бомба пăрахнă тата унсăр пуçне 11 пин тонна бомба Германи оккупациленĕ çĕршывсенчи объектсем çине пăрахнă.

Уйрăмăн илсе кăтартсан, самолетсем е авиаци оборудованийĕ туса кăларакан 16 пысăк завода хаярран тыра-пыра çапнă. Çав заводсене пурне те е пĕтерсе лартнă, е питĕ вăйлă сиенленĕ, çавăнпа та вĕсем ĕçлеме пăчах пăрахнă, хăш-пĕринче ĕçлекелессĕ пулин те авиаци хатĕрĕсене питĕ сахал туса кăлараççĕ.

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, самолетсем çинчен ÿкерсе илнĕ ÿкерчĕксем акă мĕн кăтартса панă: Аугсбургри «Ман» фирмăн питĕ пысăк заводĕ пĕтĕмпех сĕмĕрĕлнĕ. Ку завод нимĕçсен подводнăй лодкисем валли кирлĕ дизель-моторсен тĕп пайне туса тăнă.

## БЕРЛИНА СЫВЛĂШРАН ТАПĂННĂ ЧУХНЕ ЭСЭСОВЕЦСЕМ ХĂРАСА ŸКНИ

ГЕТЕБОРГ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Швецсен «Гетеборгс моргонпост» ятлă хаçачĕ Берлинра танксем туса кăларакан заводра ĕçлесе пурăннă, кайран Германирен тухса тарнă пĕр француз каласа кăтартнине пĕлтерет. Çак француз юлашки хут Берлина тапăннă чухне эсэсовецсем чĕтрене ерни çинчен çапла каласа кăтартнă: Берлина пĕр тăрук 750 бомбардировщик тапăнчĕç. Çак тапăнура бомбăсем пăрахнипе пула завод йăлтах ишĕлсе анчĕ. Урамсем тăрăх патруллесе çÿрекен эсэсовецсем кам вĕсене шанчăксăр пек туйăннă, çавсене пурне те пулеметсемпе печĕç, мĕншĕн тесен вĕсем ют çĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисен хушшинче хумханусем тухса каясран хăрана пулмалла.

## ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: тĕп фронтри тусен центральнăй секторĕнче союзниксен çарĕсем пĕр мильăпа яхăн малалла куçнă, пĕр паха çÿллĕ вырăна туртса илнĕ. Тăшман Кассино районĕнче кĕрешекен новозеландецсен чаçĕсен позицийĕсене тапăнса икĕ пĕчĕк атака пуçласа янă, вĕсене иккĕшне те сирсе янă. Çавăн пекех тăшман Римран кăнтăртарахри плацдармра кĕрешекен Англи çарĕсене атакăланă, тăшманăн ку атакине те сирсе янă. Тăшмана çухатусем кÿнĕ.

## ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ АЛЛАНД УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ АННА ТЕСЕ ПĔЛТЕРНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин информаци агентстви çапла пĕлтерет: Германи çарĕсем Алланд утравĕсем çине аннă тесе пĕлтерни тĕрĕс мар, тет.

«Нюа даглигт аллехандa» ятлă хаçат çапла çырать: «Дейли телеграф энд Морнинг пост» Алланд утравĕсене нимĕçсем оккупациленĕ тесе пĕлтернĕ хыпара тĕрĕс тесе каламашкăн Стокгольмра нимĕнле сведени те çук, тет.

## КĔСКЕН

▲ Америкăнецсен подводнăй лодки Лăпкă океанра японецсен 11 суднине, вăл шутра 3 транспортне, шыва путарнă.

▲ Акăлчансен «Москито» йышши хăвăрт вĕçекен бомбардировщикĕ халĕ 2 тонна таякан бомба çĕклесе вĕçет. Малтан вăл мĕн пурĕ те çур тонна таякан бомба кăна илсе çÿреме пултарнă.

▲ Мартăн 23-мĕшĕнче Везувий шăтăкĕнчен тата тепĕр питĕ пысăк лава фонтанĕ сирпĕнсе тухнă. Везувий тăррине халĕ тимĕр тутăхĕ тĕслĕ кĕл хупласа выртать. Везувирен 120 километрта выртакан Бари хули çинче йĕри-таврах вулкан кĕлĕн кушисем тем хулăмĕш йăванса тăраççĕ. Неапольпе Салерно хушшинчи çула кĕлрен тасатнă, халĕ вăл çулпа каллех çÿреме пуçланă. Лава йăванса пырса çĕнĕ районсене хупласа илес хăрушлăх халĕ сирĕлнĕ пек туйăнать.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

# Вăл 36 нимĕçе вĕлернĕ

Пирĕн çарсем Р. хули патне çывхарса пынă. Нимĕçсем хула йĕри-таврах кăшăл çавăрнă пулнă. путăк-шăтăк алтса тухнă, йĕплĕ пралук карнă, чултан та тимĕртен тунă дзотсем лартса тултарнă,, хăйсем çĕр айне тарса пытаннă.

Çĕр çĕмĕрсе тупăсем кĕрленĕ, самолетсем тонпăшаран хĕртнĕ хурçă тăкнă, минăсем уланă, хаяр сасăпа пулеметсем шатăртатнă, пехота атакăна кĕнĕ...

Арканнă нимĕçсен тимĕр кăшăлĕ, дзочĕсем тăпра пулса пĕлĕтелле çĕкленнĕ, татăкан-татăкан таталнă йĕплĕ пралук, унта та кунта нимĕç вилли выртнă...

Пирĕн çарсем хулана кĕрсе пынă. Сасартăках пирĕн пехота çине сыхланса юлнă вицĕ дзотран ултă пулемет пеме тытăннă, çула пÿлсе тăнă. Малалла та ăнăçлăн куçса пырас тесен, дзотсене пусарса лартмалла пулнă. Анчах та вĕсем патне пыма çăмăл пулман.

Кас çывхарса килнĕ. Чиркÿ-Кассинче (Сĕнтĕр районĕ) çуралса ÿснĕ чăваш ачи Иван Прокопьевич Иванов хăйĕн юлташĕсемпе мĕн тĕттĕм пуличченех нимĕçсен дзочĕсем енне сăнаса пăхнă, çулйĕр шыранă, меллĕ вырăн тупас тенĕ. Чĕтрене ернĕ нимĕçсем çĕрле те пеме чарăнман.

Иванов, дзотсене пусарса лартма часть командирĕнчен ирĕк илнĕ те, 12 боецпа—Урал ачисемпе—лайăххăн кăна хĕçпăшалланса нимĕçсем енне хырăмпа шунă. Хыçалтан пырса çапасса нимĕçсем кĕтмен, çине-çинех вицĕ дзот, 17 гитлеровецпа пĕрлех, сывлăшалла çĕкленнĕ. 6 пулемет шăпланнă, 6 фашист тыткăна лекнĕ.

Ирхи шуçăм çывхарса килнĕ. Ивановăн отделенийĕ çине тăрăхса çитнĕ нимĕçсем вицĕ танк тата автоматчиксен ушкăнне яраççĕ. Иванов салтакĕсем икĕ танка гранатăсемпе пĕтерсе хураççĕ, ÿсĕр нимĕçсене пулеметран çулса тăкаççĕ. Нимĕçсем çаплах чарăнмаççĕ, çаплах сĕмсĕрленеççĕ. Вĕсем пĕр ротăна çити салтакпа тата 5 танкпа çĕнĕрен психически атака тăваççĕ.

Хирĕç-хирĕç тăпă вăйсем—тан мар. Иванов хăй те малтанхи атакăрах аманнă, 4 латтăрĕ вилнĕ. Çапах та вăл чакман, çиччĕн çеç юлнă пулин те, сурансенчен юн юхнă пулин те, йышлă ушкăнпа килекен тăшмана вутпа кĕтсе илнĕ. Танк хыççăн танк çунма тытăнать, фашист хыççăн фашист çĕре персе анать. Вăйлă аманнă командир çаплах хăйĕн паттăрĕсене харсăрлатнă.

Часах Сорокин майорăн чаçĕ пулăшупа çитет. Пирĕн çар Р. хулине вăркăнса кĕрсе каять.

Хытă аманнă Иванов вăрçă хирĕнче юн юхтарса выртнă, аманнă пулин те çапăçуран тухман. Васкаса çитнĕ сестра ун суранне бинтпа çыхнă та, ăна госпитале ăсатнă. 400 грамм юн ярсан тин Иванов тăна кĕнĕ. Госпитальрех вăл хăйне «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăлани çинчен илтнĕ, хăй аллипе хăй 36 фашиста вĕлернишĕн савăннă.

Капитан Иванов 22 уйăх хушши вăрçăра пулнă. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çапăçура вилнĕ командир вырăнне тăрса часть салтакĕсене атакăна ертсе кĕнĕ вăл, çавăншăн ăна «За отвагу» медаль панă. Халĕ Иванов, 23 çулхискер, Фрунзе ячĕпе тăракан Çар Академийĕнче вĕренет.

«Мухтавшăн мар хамăн чапшăн та мар, — Тăван çĕршывшăн, ăна нимĕçсенчен тасатассишĕн çапăçатăп эпĕ. Тăван аннене юратнă пек юрататăп эпĕ аслă Тăван çĕршыва! Юрататăп Чăваш çĕршывне. Ăçта пулсан та—Тихвин таврашĕнче-и, Калинин вăрмансенче-и, Псков шурлăхĕсенче-и, Литва çĕрĕнче-и,—йăлтах эпĕ ватă Шупашкаршăн çапăçнă». Çапла çырнă Иванов хăйĕн ачалăхри юлташĕ патне.

«Эпĕ офицерăн пысăк ятне çÿлте тытмалла. Суворов калашле: Вĕренетĕп. Служить тăвататăп. Сывлăхлă!» Çапла çырать вăл тăван ял-йышĕ патне.

Вĕрен, Иванов юлташ, ÿс, пысăк çын пул! Тăван çĕршыва хÿтĕлесси чи пысăк ĕç, чи пархатарлă ĕç!

**СТИХВАН ШАВЛЫ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00078 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз